**Вулакансене пăшăрхантаракан электричество ыйтăвĕсемпе**



# Çĕнĕ урамсенче

Раççейре наци проекчĕсем ĕçлеме пуçлани çĕршыв ял хуçалăхĕпе ялта пурăнакансем çине те тимлĕх уйăрма тытăннине кăтартать.

Районти 177 ялтан кашнинче майлах çĕнĕ урамсем пур. Вĕсенче малтан шутланă тăрăх (хальлĕхе проектпа смета докуменчĕсем çук-ха) 0,4 кВ хăватлă электролинисем 33,58 км, 10 кВ хăватлисем 1,08 км пулмалла. Кăçал çулталăк вĕçлениччен Итакачкассинчи Восточная (0,4 кВ хăватлă 0,83 км электролини тата КТП-160 кВА трансформатор) тата Первомайская (0,4 кВ хăватлă 1,02 км, 10 кВ хăватлă 0,815 км электролинисемпе КТП-100 кВА трансформатор) урамсене çĕнĕ электролинисемпе трансформаторсем вырнаçтарса пĕтеретпĕр. Çĕнĕ урамсене электрификацилессипе çитес çул валли ĕç планĕ хатĕрлетпĕр. Унта Кашмашри Яриков тата Львов ячĕллĕ, Ярапайкассинчи Новая, Милютакассинчи Складская, Иштерекри Северная, Отарккăри Садовая, Çĕньял Орининти, Патаккассинчи урамсем кĕреççĕ. Ĕç планĕ хатĕрленĕ май унта улшăнусем те пулма пултараççĕ. Çапла пĕлтерчĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин.

**Сăмах – суд приставне**

# Ашшĕпе амăшĕ ăнланманнишĕн ачасем айăплă мар

Пурнăç 21-мĕш ĕмĕр утăмĕсемпе аталанса пырать. Малалла пăхакансем производствăна çĕнĕ технологисем кĕртсе ĕç тухăçне ÿстереççĕ, çак çулпа кайса вĕсем предприяти-организацин экономикине малалла аталантараççĕ. Çакнашкал мал туртăмлă ĕçленĕ хушăра та ашшĕ-амăшĕсемпе ачисем хушшинче татса паман ыйтусем сиксе тухаççĕ. Вĕсене саккунпа килĕшÿллĕн йĕркелесе пыма час-часах суд приставĕсен те хутшăнма тивет.

Вăрттăнлăх мар, Раççейре çемье, ача, ача амăшĕ, ача ашшĕ пĕлтерĕшсем çĕнĕ шая çĕкленнĕ вăхăтра обществăра мăшăрсем уйăрăлни, çавна пула ачасем ытларах чух ашшĕсĕр юлни, хăйсене йĕркесĕр тытнăран ашшĕ-амăшĕсене ача прависенчен хăтарни те тĕл пулкалать-ха.

Мăшăрсем судпа уйăрăлнă процесра алимент шыраса илес ыйту тĕп ыйтусен шутĕнче. Суд алимент шыраса илме йышăну тусан çакна пурнăçламалли документсем е судран, е алимент шыраканран суд приставĕсен службине пыраççĕ. Алимент обязанноçĕсем пирĕн обществăри чи хÿтĕленмен сие (çул çитмен ачасемпе ватă граждансене) пырса тивнĕрен вĕсене йĕркеллĕ пурнăçласси приоритетлă задача пулса тăрать.

Алимент шыраса илессипе суд производствин ĕçĕсене пурнăçланă чух суд приставĕсем "Об исполнительном производстве" тата "О перечне видов заработной платы и иного дохода, из которых производится удержание алиментов на несовершеннолетних детей" федераллă Саккунсемпе килĕшÿллĕн ĕçлеççĕ.

Алимент шыраса илессипе суд йышăнăвĕсене пурнăçланă чух час-часах çивĕч ыйтусем сиксе тухаççĕ. Пурнăçри йывăр социаллă-экономика лару-тăрăвне курса тата ăна çăмăллатма парăмçăсем час-часах ытти регионсене ĕçлеме тухса каяççĕ те унта ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелемесĕр ĕçлеççĕ. Çакă вĕсем ăçта ĕçленине, пурăннине, мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине палăртма çукки патне илсе пырать.

Тепĕр ыйту вăл – алимент парăмне палăртасси. Çемье кодексĕн 81 статйипе килĕшÿллĕн çул çитмен ачасене ĕç укçин пайĕпе тÿлемелли ку виçене ĕçлесе е урăх енпе тупăш илнĕ укçаран ĕç тăвакан суд приставĕ алимент тÿлевĕ мĕн чуль пулманнине кура палăртать (РФ Çемье кодексĕн 113 статйин 4-мĕш пункчĕ). Енчен те парăмçă вăл тапхăрта хăй ĕçлемённине, ĕçлесе е ытти енпе илнĕ тупăша кăтартаймасть пулсан, алимент парăмне алимент шыраса илмелли кун тĕлне Раççей Федерацийĕнчи вăтам ĕç укçи çине таянса палăртаççĕ. Росстат кăтартăвĕсемпе Раççейри вăтам ĕç укçи калăпăшĕ паянхи куна 13711 тенкĕпе танлашать. Нумай парăмçăсемшĕн кун пек чух уйăхсерен пĕр ача пуçне асăннă суммăн 4-мĕш пайне тÿлесси те çăмăл ĕç мар.

Паянхи куна районти суд приставĕсен пайĕнче официаллă ĕç вырăнĕ çук парăмçăсенчен алимент шыраса илессипе 124 ĕç пур. Вĕсенчен 32-шĕ кăна уйăхсерен алимент тÿлесе тăраççĕ. Ытти парăмçăсем вăл е ку сăлтавпа хăйсен çул çитмен ачисене пăхса тăма вăхăтра алимент тÿлессинчен пăрăнаççĕ. Кун пек тĕслĕхсенче саккун тĕрлĕрен яваплăх тыттарать.

Уйрăмах хаяр айăплав вăл – уголовнăй майпа ответ тыттарни. РФ Уголовнăй кодексĕн 157-мĕш статйинче суд йышăнăвĕпе çул çитмен ачасене тата 18 çул тултарнине пăхмасăр ĕçлеме пултарайман ачана пăхма палăртнă алимента тÿлессинчен сĕмсĕррĕн пăрăнакан ашшĕне 120–180 сехет обязательнăй ĕçсемпе айăплама е пĕр çул ĕçлесе юсанмалла тума, е 3 уйăх таран арестлеме пăхнă. Кăçалхи январь-октябрь уйăхĕсенче ĕç тăвакан суд приставĕсем районти прокуратурăна РФ УК 157 статйипе пăхнă алимента тÿлессинчен пăрăннăшăн 15 ĕç тăратрăмăр. Айăплисем тĕлĕшпе уголовнăй ĕçсем пуçарса суд урлă кашнинех ответ тыттарма тиврĕ.

Алимент тÿлемелле тунисен пĕр пайĕ çийĕнчех ĕçе вырнаçать те вĕсем тĕлĕшпе вăхăтран вăхăта ĕç укçинчен пĕр пайне тытса юлмалли пирки ĕç тăвакан документ парăмçă ĕçлекен предприяти администрацине каять. Суд приставĕсем кун пек чух асăннă предприятисен бухгалтерийĕсене планлă тĕрĕслеççĕ кăна. Анчах асăннă тĕрĕслевсем те яланах ĕçсем тĕрĕс пынине кăтартмаççĕ. РФ Çемье кодексĕн 111-мĕш статйипе килĕшÿллĕн суд решенийĕпе алимент тытса юлакан предприяти администрацийĕн алимент тÿлекен ĕçрен тухса кайнă хыççăн кун пирки тата унăн çĕнĕ ĕç вырăнĕпе, паллă пулсан, вăл çĕнĕрен ăçта пурăнма пуçланине 3 кун хушшинче ĕç тăвакан суд приставне пĕлтермелле. Хăш-пĕр чух парăмçă ĕçрен темиçе уйăх каяллах тухса кайни, анчах ун тĕлĕшпе алимент шыраса илесси пирки ĕç тăвакан хут бухгалтери сейфĕнчех упранни тĕл пулать. Е тата алимент тÿлекен чылай хушă предприятире ĕçлет пулсан та, унăн ĕç укçинчен алимент суммине тытса юлма тивĕçлĕ бухгалтери ăна тивĕçлипе шыракан çынна куçарса памасть. Пĕлменнипе е ятарласа суд йышăнăвне пурнăçламан бухгалтерсем тĕлĕшпе протоколсем çырса вĕсене административлă майпа ответ тыттарма тивет.

Хамăн калаçăвăм вĕçĕнче предприяти ертÿçисене хăйсен бухгалтерийĕсенче судран тăратнă ĕç тăвакан хутсем пуррипе çукки пирки интересленме сĕнес килет. Алимент шыраса илмелли кашни документ хыçĕнче – кунсерен пулăшу кĕтекен çул çитмен çамрăк шăпи.

**С. ШАРАПОВ,**
**районти суд приставĕсен пайĕн ĕç тăвакан суд приставĕ.**

**Пулса иртни хыççăн: чавса çывăх та çыртма çук**

# Аншарли ан шарла, тет те...

Ноябрĕн 30-мĕшĕ. Хура кĕркуннепе хĕл ылмашăннă кун. Ĕнер кăна-ха пылчăк çăрăлнă çулсем çинче паян шурă юр выртать. Çĕр шăнтмасăрах хĕл ларĕ-и-ха текенсен ыйтăвĕ çине çĕрле çунă юр ку таранччен пулнă иккĕленÿлĕхе сирчĕ. Паян никам та çанталăка кĕрхи тесе каламĕ. Пахчари улмуççисемпе çырла тĕммисене, çул хĕрринчи тата çывăх вăрманти йывăççене пас тытни хĕл илемне çывăхарах илсе килни пирки те хирĕçле сăмах çук. Ура айĕнче кăчăртатакан юр çĕнĕ çул çывхарни пирки систерсе калаçать. Промышленность предприятийĕсенче, патшалăх учрежденийĕсенче ĕçсем хĕл тапхăрĕпе йĕркеленсе пыраççĕ. Çĕр ĕçченĕ вара асатте-асаннесем каланă пек урапа янтăлать: шурă тумлă хĕл кунĕсем хыççăн çур аки килесси уншăн вăрттăнлăх мар. Илемлĕ вăхăт темелле, анчах çак илемпе киленме пĕлменнисем пирки мар ку сăмахсем.

...Районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй пÿлĕмĕнчи телефон теме систерсе сас пачĕ. "Дежурнăй итлет...". Усал хыпар утпа çÿрет, теççĕ те, ку хутĕнче те çаплах пулса тухрĕ. Шăнкăравлакан арçын хăйне Владимир Анатольевич Петухов тесе паллаштарса килĕнче ашшĕпе амăшĕн виллисене тупнине пĕлтерчĕ. Оперативлă ушкăнпа çийĕнчех вырăна тухрăмăр, малтанхи следстви ĕçĕсем туса ирттертĕмĕр. Районта пурăнакан нумай çынна пырса тивекен ку тĕслĕх пирки халĕ тĕплĕнрех паллаштарсан та йăнăш пулас çук. Инкек никĕсĕнче эрех-сăрана çывăх çынран ытла юратни, кÿршĕсем хăйсемпе юнашар пурăнакансем вăрçни-ятлаçнине курмăш пулни, пĕр çемьере пурăнакансемех хăйсем хушшинчи урлăпирлĕ хăрушă сăмахсене çывăха илменни т. ыт. те пысăк инкеке çул панă.

Çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлнă 70 çулхи кил хуçи мăшăрĕ Елизавета Павловна тата 73 çулхи Анатолий Васильевич Петуховсем пирки ялта лайăххине кăна каланине илтме тÿр килмерĕ. Ял çыннисем, кÿршĕсем тата ачисем каланă тăрăх асттепе асанне хăйсем хушшинче тăтăшах харкашнă, эрехпе туслашсах кайнă вăхăтсенче упăшки арăмне пĕрре мар хăй çут тĕнчерен уйăрăличчен вĕлерессипе хăратнине те сахал мар илтнĕ. Илтнĕ те ÿсĕр çын сăмаххисене çилпе вĕçтерсе янă. Пĕлнĕ пулсан...

2007 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче тăванĕ патĕнче ĕçленĕ Владимир Анатольевич Петухов 9 сехет иртсен тăванĕпе киле таврăнсан пÿрт алăкĕсем шалтан питĕрĕнчĕк пулнине асăрхать. Шаккасан та уçакан пулманран Володя путвал алăкĕпе пÿрте кĕрет. Пĕртак вăхăт иртсен хайхискер алăксене уçса кил хушшине тухать. Вăл пăлханчăк пулнине кура пĕрле пулнă Е. Петухов пÿрте ыткăнса кĕрет те Володьăн ашшĕ маччари çекĕлтен çакăнса хăйĕн пурнăçĕ çине алă хунине курать. Пĕрле пулса вĕсем ăна вĕçертсе диван çине илсе хурсан, арçынсем тепĕр пÿлĕмре вăйпа вĕлернĕ амăшĕн ÿтне тупаççĕ. Алăксене пурне те питĕрни тата электросчетчикпа газ хуранне сÿнтерни пÿртре шухăшласа тунă хăрушă ĕç пулса иртни пирки ăнлантараççĕ. Тинех унччен 70 çултан иртнĕ старик каланă хăрушă сăмахсем тÿрре килни куç умне тухать. Ывăлĕ шутланă тăрăх ашшĕ малтан амăшĕ çине алă çĕкленĕ, унăн пурнăçне татнă, хыççăн тин хăйĕн çине алă хунă. Çакна судпа медицина тĕрĕслевĕсем те çирĕплетеççĕ. Е.П. Петухова пурнăçĕ мăй тĕлĕнчен виçĕ хутчен тата хырăмăн аялти пайĕнчен çĕçĕпе чикнинчен юн нумай çухатнипе татăлни паллă. Çак ĕçе А.В. Петухов тунине вăл хăйĕн çине алă хурас умĕн çыру çырса хварни те çирĕплетет: "Чăтаймасăр вĕлертĕм. Ун пек хĕрарăма тепĕр çын пулсан давно вĕлеретчĕ. Лизăна вĕлертĕм те хам пурнăçа та пĕтерес терĕм".

Вырăнта пулнă çĕçĕне илсе тĕпчесен те ун çинче Е. Петухова юнĕ пуррине хирĕçлеме çук.

Халĕ паллă, çак инкеке тăванĕсем те, ял çыннисем те кил хуçи хăратнисем пирки районти шалти ĕçсен пайне вăхăтра пĕлтерсе сирнĕ тата инкек тÿсекенсем эрехпе туслă пулман пулсан курмасан та пултарнă. Халĕ вара... "Ырăпа асăнмалли çук. А. Петухов çынсем умĕнчех пĕрре мар арăмне çĕçĕпе чиксе вĕлерессипе, хыççăн хăйĕн çине алă хурассипе хăратни пулса. Ялта ачисемпе хăйне валли тунă виçĕ пÿртне вут тивертесси пирки те калатчĕ. Арăмĕ те ун пирки япăххине кăна калатчĕ. Çакăншăн ăна упăшки час-часах хĕнетчĕ. А. Петухов çине-çинех эрех ĕçме пуçласан, унăн кăмăлĕ уйрăмах хаяр та усалччĕ", – çыраççĕ паян кÿршĕсемпе ял çыннисем.

"Анатолий Петухов ÿсĕр пуçпа мăшăрне пĕрре мар пуртăпа хăратни пулса. Вăл килти выльăхсене те килĕштерместчĕ. Кÿршĕсен выльăхĕсем вĕсен картисем патне пырсан алла мĕн лекет унпа çапатчĕ-хăвалатчĕ", – теççĕ паян кÿршĕре пурăнакансем. Çак ÿкерчĕксене ывăлĕсем те курман мар, анчах вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнманран ылтăн туй уявламалли мăшăрсем пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕç.

Енчен те мăшăрсем хушшинчи хутшăну çакнашкал йывăр пулнине вăхăтра шалти ĕçсен пайне пĕлтернĕ пулсан, хăрушă пулăма пăрса ирттерме те пулатчĕ. Çакă районта пурăнакан нумай çыншăн урок пуласса шанатăп.

... Хĕл кунĕнчи черетлĕ çилтăман. Ман умра иккĕн утаççĕ. Вĕсем хыççăн юлакан ура йĕрне вара çурçĕр çилĕ юрпа картласах пырать.

**М. ТАРАСОВ,**
**ЧР РФ прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн уйрăмах кăткăс ĕçсемпе ĕçлекен следователĕ.**

**Профсоюз хуçалăх пурнăçĕнче**

# Ĕçлекен çынна тивĕçлипе хаклама тăрăшатпăр



Вăхăт сисĕнмесĕр иртет. Ĕнер ачалăхра пĕрле чупнă-вылянă тантăшсем паян ĕçре пуян опыт пухнă специалистсем, хуçалăх аталанăвне вăй çитнĕ чухлĕ тÿпе хывакансем. Тăван хуçалăх ĕçĕнче вăй хуракан кашни ĕçчен хуçалăхăн ыранхи кунĕ пирки шутлани мана пĕрре те иккĕлентермест. Апла пулсан пирĕн те çав ĕçченĕн пуласлăхĕ пирки çиччĕ виçсе пăхмалла. Çапла тăвас тетпĕр те эпир хамăр ĕçĕмĕрте.

Ял хуçалăх производстви питĕ теветкеллĕ отрасль. Кунти ĕç-хĕл çут çанталăк условийĕсемпе тачă çыхăннă. Вăл е ку тапхăрта çумăр çуни е шăрăх тăни хресченĕн ĕç кăтартăвĕсем çинче тÿрех курăнать. Акă, çулталăкăн 10 уйăхĕ хыçа юлчĕ. Умра хĕл кунĕсем. Ун хыççăн вара каллех çур аки, малашлăха пăхса канăçа çухатнă кунсем... Çак çыхăнура производствăна кирлĕ шайра йĕркелесси, технологие пăхăнса ĕçлесси, ĕç дисциплинине çирĕп алăра тытасси йăлтах хамăртан килет. Анчах паян пирĕн çак пахалăхсем çÿллĕ шайра теме çук-ха. Çав вăхăтрах продукци ытларах туса илесси, ун никĕсĕ çинче хуçалăх экономикине вăйлатасси йăлтах хамăртан килнине те эпир аван пĕлетпĕр. Хуçалăх экономики вăйлă пулсан, хуçалăх хăйĕн ĕçченĕсене ытларах пулăшу пама пултарасси те никамшăн та вăрттăнлăх мар. Пурнăçра вара темĕн те пулать.

Хуçалăх дирекцийĕпе профсоюз комитечĕ куллен вуншар ыйту пăхса тухаççĕ тата татса параççĕ. Паянччен хуçалăхра ĕçлекен пĕр çын та пулăшусăр юлман.

Профсоюз комитечĕ хуçалăх дирекцийĕпе килĕшÿллĕн хуçалăхра лайăх ĕçлекенсене хавхалантарма тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисемпе хисеплĕ ятсем пама вăхăтра хутсем хатĕрлесе тăратать. Кăçал паян кунччен пирĕн патăмăрта ĕçлекен 49 ĕçчен тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисене илчĕ те ĕнтĕ. Вĕсенчен 7-шĕ çав хутсемпе ĕç ветеранĕн ятне те тивĕçеççĕ. Палăрăмлă утăм мар-и-ха çакă? Хирĕçле хурав çук.

Производствăра нумай çул ĕçлекенсем çине тимлĕх уйăрнипе пĕрлех профсоюз комитечĕ çитĕнекен ăрăва та куç хĕрринче хăвармасть. Çуллахи каникул вăхăтĕнче ачасене хуçалăх ĕçне явăçтарма ĕç условийĕсем хатĕрлетпĕр. Çавăнпах çулла пирĕн ачасем йĕтем çинче те, уйра та, пăрусем пăхнă çĕрте те хастарлăхпа палăраççĕ. Ĕçшĕн тÿлесси вара кунта та тĕрлĕрен хавхалантарусемпе çыхăннă. Пĕлÿ кунĕнчи хаклă парнесем – çак утăмри пĕр ен. Тав сăмахĕпе пĕрле çакнашкал парнене кăçал 72 шкул ачи тивĕçрĕ. Ачаллах ĕçе хăнăхакан ачасем ÿсерехпе те çĕр ĕçĕнчен пăрăнсах каймĕç тесе шутлатпăр.

Хуçалăх экономикине аталантарассишĕн вуншар çул вăй хунă ĕç ветеранĕсем пирĕн хуçалăхра 700 çын ытла. Вĕсенчен 290-шĕ 70 çултан иртнĕ ватăсем. Хуçалăх дирекцийĕпе килĕшсе татăлса вĕсене Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕнче 100-шер килограмм тÿлевсĕр тырă паратпăр. Тĕрлĕ шайри хисеплĕ ятсене илнисене вара кăçал 300-шер килограмм тÿлевсĕр тырă валеçсе патăмăр.

Иртнĕ кунсенче хуçалăхра ĕçлекенсен 5 ачи тÿлевсĕр путевкăсемпе санаторисенче сывлăхĕсене çирĕплетсе килчĕç.

Анчахрах-ха Аннесен кунĕ хыçа юлчĕ. Аннерен хакли пур-и тĕнчере? Паллах çук. Пирĕн хуçалăхра та маттур хĕрарăмсем-аннесем нумай. Вĕсем кашниех шаннă ĕçре пултарулăхпа палăраççĕ, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Вĕсенчен çаксем тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисемпе хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ:

– Любовь Алексеевна Соловьева – "ЧАССР тава тивĕçлĕ зоотехникĕ";

– Валентина Германовна Трофимова – "ЧАССР тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ";

– Елена Яковлевна Селедкина – "Ĕç Мухтавĕ" 3 степень орденĕ;

– Мария Потаповна Степанова – "ЧР тава тивĕçлĕ экономисчĕ";

– Лилия Ивановна Васильева – "ЧАССР тава тивĕçлĕ экономисчĕ";

– Валентина Александровна Григорьева – "ЧР тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ";

– София Алексеевна Иванова – РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамоти.

Кăçал ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине пĕрремĕш ĕне ферминче чылай çул ветфельдшер пулса ĕçлекен Любовь Михайловна Тимофеева тивĕçрĕ. Анчахрах иртнĕ сумлă уяв ячĕпе Сире тепĕр хут ăшшăн саламлатпăр. Ачăрсем сире савăнăçпа телей кÿччĕр!

Эпир паян çĕршыври питĕ пĕлтерĕшлĕ тапхăрта пурăнатпăр: декабрĕн 2-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думине депутатсем суйларăмăр, тепĕр виçĕ уйăхран РФ Президентне суйламалла. Çак тапхăра ăнăçлă та пĕр шухăшлă ирттерни тÿрремĕнех пирĕн пуласлăхпа çыхăннă. Апла пулсан тĕрĕс çултан пăрăнса юлас марччĕ.

**Л. НИКОЛАЕВА,**
**"Ударник" хуçалăхри профсоюз комитечĕн председателĕ.**

**Вулакан пултарулăхĕ**

# Пĕр санпа...

Кунĕпе сан çинчен шухăшлатăп
Эс пĕлместĕн, туймастăн çакна.
Каççерен тĕлĕкре аташатăп
Пĕр санпа, пĕр санпа кăна.

Куççемпе пур çĕрте те шыратăп
Санăн ыră, йăваш куллуна.
Тĕл пуласчĕ тесе тăрăшатăп
Пĕр санпа, пĕр санпа кăна.

Кĕркунне ак кĕçех иртсе кайĕ,
Шурă юр та хуплĕ таврана.
Чăрсăр вăхăчĕ иртĕ те шăвĕ –
Пурпĕр кĕтĕп ялан эп сана.

**ШАНĂÇПИ.**